Шупашкар район хаçачĕ ✵ 1932 çулхи июлĕн 27-мĕшĕнче тухма пуçланă

# ТĂВАН ЕН

149 (9291) № ✵ 2006 çулхи декабрĕн (раштав уйăхĕн) 27-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

✵ Ял хуçалăхĕ

## ÇĔНĔЛЛЕ ĔÇЛЕСЕ КАЙНĂ

***«Çакăн пек ĕçлеме пуçламасăр ял хуçалăхне аталантараймăн», – пĕлтерчĕ хăйĕн шухăшне район ертӳçи А.П.Князев эрне кун «Чурачикское» обществăна çитсе курнă хыççăн. Кооператив пулнă предприятие акционерлă тума та çăмăл пулман. Халăхĕ тĕрлĕрен йышăннă. Анчах ĕнерхи кооператив членĕсем, паянхи акционерсем, хăйсен утăмĕшĕн ӳкĕнмеççĕ.***

**Кăлпасси** цехĕ тытнипе пĕлнĕ унччен Чурачăксем Е.Ф.Шалеева. Асăннă хуçалăхра лару-тăру çăмăл мар вăхăтра пуçне ял хуçалăх предприятине пырса чикме шикленмен предприниматель. Çĕнĕ çыннăн пирвайхи утăмĕсенчен пĕри вăл – сахалланса юлнă выльăх-чĕрлĕх шутне (73 пуç сумалли ĕне тăрса юлнă) ӳстерме тытăнни. «Чурачăкра ĕне-выльăх пуçтараççĕ-ха» текен сăмах халăхра вăл вăхăтра хăвăрт сарăлчĕ. Çапла, уйрăм çынсенчен те туянчĕ хуçалăх. Е.Ф.Шалеев директор хăй калашле, нихăшне те тиркемен: уксах-чăлахне те, ырханнипе самăррине те, сыввипе чирлине те. «Япăх тесе пăрахăçланă ĕнесем хушшинчех 35-40 килограмм антаракансем те пулнă», – тет Евгений Федорович. Паян та çынсенчен туянаççĕ, Ишек пасарне те вĕçĕмех анаççĕ. Кунсăр пуçне Владимир облаçĕнчен ăратлисене 25 пуç туяннă.

**Выльăх** шучĕ ӳссе пынă самантра тепĕр çивĕч ыйту – рабочисем çитменни – куçкĕрет сисĕннĕ. Скотник вырăнне кĕреçе тытса ертӳçĕ хăй те тислĕк хырнă. «Хуçалăхра çĕр касни те пулнă», – аса илет малтанхи кунсене. Пĕринче, ЧР Ял хуçалăх министерствин кунĕнче, «Чурачикское» обществăра пулнă чух Евгений Федорович «йывăр» тесе каланине астуса юлнăччĕ. Ĕçлекенсем çуккишĕн пăшăрханатчĕ. Пĕр-ик куна тухса тепĕр темиçе кунлăх çухалакансем пулнă. Дояркăсем те çавăн пекех хăтланнă. Шăпах çакă Е.Ф.Шалеева урăхла меслет шырама хистенĕ те. Çăлăнăçа сĕт сумалли зал тунинче курнă вăл. Çак шухăшпа района килнĕ, кредит илес ĕмĕтлине пĕлтернĕ. АПК аталанăвĕ çинчен калакан наци проекчĕпе ăнăçлă усă курнă Чурачăксем. 5 миллион тенкĕ илнĕ, ыттине общество хăйĕн туприне уйăрнă. Кивĕ вите çумне çĕннине çĕклесе лартнă.

**Укçана** шутлама пĕлнине строительство ĕçĕсене валли прицеплă КамАЗ туяннинчен пуçлани те çирĕплетсе парать. Пĕр енчен, чăн та, фермăпа ку машинăн çыхăну çук тейĕн. Анчах ку вăл малтанласа кăна. Евгений Федорович каланă тăрăх, стройматериал тата ытти турттарнипе хака машина халех 600 пин тенкĕлĕх кăларнă. Стройкăра общество ытларах хăй вăйĕпе усă курнă, ютран пĕр бригада кăна тытнă.



Хăнасем çĕнĕ залпа паллашаççĕ. Аялта тăраканни – Е.Ф.Шалеев директор.

Фото ӳкерчĕкĕ авторăн.

**Сĕт** сумалли зал иртнĕ уйăхăн пуçламăшĕнче ĕçлесе кайрĕ унта. Майракаллă шултра выльăх хуçалăхра халĕ 459 пуç, вĕсенчен 245-ĕшĕ – сумалли ĕнесем. Малтанхи ултă доярка вырăнне паян иккĕн сăваççĕ. Тепĕр сменăна тепĕр иккĕн тухаççĕ. Икĕ коровникра – пĕрер скотник, сумалли зала кĕртнĕ чух ĕнесене хăваласа паракан тепĕр çын пур. Ĕç укçи мĕн чухлĕ ларасси сăвăмран килет.

**Выльăх** апачĕн рационне пăхса тăраççĕ, углеводпа пуянлатма турантă (жмых) туянаççĕ. Ун патне Саратова, Пензăна каяççĕ. Ку апат кашни ĕне пуçне 1,5 килограмм лекет. Тырă 400 тонна туяннă. Сысна тытассине пăрахăçласшăн. Ӳсен-тăран отраслĕнче нумай çул ӳсекен курăкпа ытларах ĕçлесшĕн. Вăл – симĕс апатлăх тата утăлăх. Тырă туса илнин пайти çук тесе ăна туянас направление палăртаççĕ. Сăмах май, кăçал фураж 400 тонна илнĕ те.

**Чурачăксен** ĕçĕ-хĕлĕпе тата сĕт сумалли залпа эрне кун районти ял хуçалăх предприятийĕсен ертӳçисемпе вĕсенчи тĕп зооветспециалистсем тата ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем паллашма пултарчĕç. Вăл кун унта канашлу иртрĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн вун пĕр уйăхри ĕç кăтартăвне те тишкерчĕç, эпизоотилле лару-тăрăва хакларĕç, АПК аталанăвĕ çинчен калакан наци проекчĕ пурнăçланса пынине сӳтсе яврĕç. Канашлăва район ерӳçи А.П. Князев ертсе пычĕ. Унта ЧР Ял хуçалăх министерствин çĕр ĕç, ӳсен-тăран отраслĕн тата инноваци пайĕн пуçлăхĕ А.А.Самаркин тата ыттисем хутшăнчĕç.

В.ЭВЕРККИ.

## УТĂМ ХЫÇÇĂН УТĂМ ÇĔНĔ ÇУЛ ÇИТЕТ

Çулсерен вĕренӳ заведенийĕсенче чăрăш капăрлатса Хĕл Мучипе Юр Пикене кĕтсе илеççĕ. Çак савăнăçлă куна ачасем чăтăмсăррăн кĕтеççĕ. Унсăр пуçне лайăх вĕренекенсемпе активлисене çулсерен Шупашкара Президент елкине илсе каяççĕ.

Паян шăпах вĕсем оперăпа балет театрĕнче шур сухалпа тĕл пулĕç те. «Пур шкултан та тенĕ пекех чи маттуррисем унта хутшăнĕç. Унсăр пуçне шкул-интернатран – 7 вĕренекен. Пĕтĕмпе вара 50 ытла ача тĕп хулари елкăра пулĕç»,– пĕлтерчĕç вĕрентӳ управленийĕнчен.

А.СУСМЕТ.

## 44 ПРОЦЕНТНЕ - ПИРĔН РАЙОНТА

Республикăра туса илекен какайран 44 процентне пирĕн районти ял хуçалăх предприятийĕсем параççĕ. Кăçалхи вун пĕр уйăхра 100 гектар ял хуçалăх çĕрĕ пуçне 355,1 центнер ларнă. Ку вăл республикăри чи лайăх кăтарту.

Выльăх-чĕрлĕх отраслĕнче ĕçлекенсем какай илессине 21 процент ӳстерсе 14 пин тоннăна çитернĕ. Вăл шутран 3,7 проценчĕ – сысна ашĕ, 6,2 проценчĕ – ĕне-выльăхăн. Ытти, хăвăрах ăнлантăр пулĕ, – кайăк-кĕшĕк какайĕ. «Чăваш бройлерĕ» обществăра 6,5 пин тонна илнĕ, «Шупашкар бройлерĕнче» – 5,2 пин тонна.

Ку отрасле кĕменнисенчен лайăх ĕçленисен шутĕнче «Чурачикское», Свердлов ячĕллĕ, Ленин ячĕллĕ, «Приволжское» хуçалăхсем. Вĕсенче выльăх шутне пĕр пек тытса пыраççĕ, ӳт хушаслăх аван, производствăра хальхи вăхăтри технологисемпе усă кураççĕ. Кăрмăшсен ĕне-выльăхĕ, сăмахран, талăксерен 646 грамм самăрăлнă, Апашсен – 607 грамм. Кăçалхи вун пĕр уйăхра майракаллă шултра выльăх районĕпе вăтамран 456 грамм (республикипе – 453 грамм) ӳт хушнă, çав вăхăтрах «Дружба» тата «Искра» хуçалăхсенче – 300 грамран сахалтарах.

Сысна самăртакансем январь-ноябрь уйăхĕсене 340 грампа вĕçленĕ. «Слава», Кадыков ячĕллĕ, «Искра» кооперативсенче ӳт хушаслăх 150 грамран пĕчĕкрех.

В.ТИТОВА.

✵ 01 асăрхаттарать

## УЯВ АН КӲТĔР ХУЙХĂ

Декабрь вĕçленет, апла Çĕнĕ çул та килсе çитрĕ. Ăна вара мĕнле-ха капăр чăрăшсăр кĕтсе илĕн? Çав вăхăтрах Çĕнĕ çул пушар тухас енчен те тимлĕ пулма ыйтать. Çакăн çинчен паян А.Л.Павлов тата С.Г.Михайлов инспекторсем асăрхаттараççĕ.

Паллă, кирек мĕнле заведенинче те чăрăша саппас алăксем пур пӳлĕме çеç вырнаçтарма юрать. Электрогирляндăсем çакас пулсан завод туса кăларнисене çеç туянмалла. Пушара хирĕç кĕрешмелли хатĕрсем ал айĕнчех пулмалли пирки те манмалла мар.

Юр сĕмĕ палăртăр тесе елкăна мамăкпа илемлетме юрататпăр. Ку вара пысăк йăнăш. Ачасене час хыпса илекен тумсем те тăхăнтартмалла мар. Çурта, хлопушка, фейерверк – каллех çулăма ирĕке кайма пулăшакансем. Тата нумай-нумай япалана пĕлес пулать Çĕнĕ çула кĕтсе илнĕ чух, уяв инкеке ан çаврăнтăр тесен.

А.АРДАЛИОНОВА.



## «НĂРХ-НĂРХ, НĂРХ-НĂРХ, НĂРХ-НĂРХ!..»

***Хĕвел тухăç гороскопĕпе 2007 çул – Çулăмлă сысна çулталăкĕ. Апла пулсан килес çул районта сысна ăнмаллах. Çапла пуласса ĕненес килет: райадминистрацин ял хуçалăх пайĕн 2006 çулхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне тунă пĕтĕмлетĕвĕсем шанăç кӳреççĕ. Хăш-пĕр цифрăсем илсе кăтартам-ха.***

Сысна шучĕ пĕрлехи хуçалăхсенче кăçалхи 9 уйăхра 2005 çулхи çав тапхăртинчен 132 процент ӳснĕ! Ленин ячĕллĕ хуçалăхăн – 118, «Приволжскин» - 111 процент. Асăннă хушăра вĕсем хăйсен кăтартăвĕсене аш сутассипе маларахри тапхăртинчен кăштах чакарнă пулсан та 2006 çула ӳсĕмпе вĕçлессишĕн пурне те тунă.

Сысна шучĕ Кадыков ячĕллĕ, «Атăл», «Атлашевский», «Слава», «Гвардеец», «Прогресс» хуçалăхсенче, хальлĕхе нумаях мар пулсан та, 2006 çулхи 9 уйăхра маларахри тапхăртинчен 104-247 процент ӳснĕ. Кашни çулах ӳсĕмпе вĕçлесен лайăх кăтартусем пулаççех.

Сысна ашĕ сутас енĕпе Свердлов тата Куйбышев ячĕллĕ, «Атăл», «Атлашевский», «Прогресс» хуçалăхсем, «Чурачикское» общество аван ĕçленĕ. Малашне те çапла вăй хумалла пултăр!

Ленин ячĕллĕ хуçалăхра Çулăмлă сысна çулталăкне лайăх кăтартусемпе кĕтсе илеççĕ.

– 2007 çулта та çавнашкалах ĕçлесшĕн-ха, – терĕ хуçалăх ертӳçи С.А.Егоров. – Тен, сыснасен хисепне кăштах ӳстерме те май килĕ.

«Çак тĕллеве пурнăçлама май пур-ши?» – тесе Паçпакри сысна ферминче пултăмăр. Шăпах çав вăхăтра кунта ĕçлекенсем сысна çурисене миххе яра-яра виçетчĕç: кашни талăкра мĕн чухлĕ ӳт хушса пынине палăртаççĕ иккен. Ферма заведующийĕ Надежда Николаевна Поликарпова каланă тăрăх, сыснасене белок апачĕпе, çăнăхпа тăрантараççĕ. Витамин таврашне Самартан тата Чулхуларан илсе килеççĕ.

Витесенче типĕ, ăшă. Коллектив нăрх-нăрх кĕтĕвне тăрăшсах пăхать. Сăмах май, Надежда Николаевна килес çул виççĕмĕш ача çуратма хатĕрленет.

Сысна пăхакансен алă усса ларма вăхăт çук. Килти ĕççене те тумалла, Çĕнĕ çула кĕтсе илме хатĕрленмелле. Вĕсене ырă сунса фермăран тухрăмăр. Пирĕн пуçра та çав шухăшсемех. Çĕнĕ çула кĕтсе илмелле. Килех, эппин, Çулăмлă сысна çулталăкĕ!

Ю.МИХАЙЛОВ.

✵ Республикăра

## ОПЫТПА ПАЛЛАШМА

ЧР Президенчĕ Н.В.Федоров кашни эрнере тунти кун ирттерекен планеркине хальхинче Ульяновск облаçĕнчен килнĕ хăнасем те – С.И. Морозов губернатор тата вĕсен сферăри министрĕсем – хутшăннă.

Канашлу вĕçленсен Николай Васильевичпа Сергей Иванович экономикăпа сутуилӳ, наукăпа техника, культура тата социаллă пурнăç енĕпе пĕр-пĕринпе килĕштерсе ĕçлемелли çинчен ЧР Министрсен Кабинечĕн тата Ульяновск облаçĕн Правительствин хушшинчи Килĕшĕве алă пуснă. Губернатор çавăн пекех пирĕн халăха чăвашсен аслă ывăлне И.Яковлева халалласа Ульяновскра палăк лартнăшăн тав тунă. «Чăваш Республики пирĕншĕн кӳршĕ çеç мар, вĕрентекен те. Пирĕн вĕсенчен опыт пухмалли пур-ха», – тенĕ вăл.

Ĕçлĕ визитпа килнĕ хăнасем «Волжская Текстильная Компания» АУО-ра, «СУОР» ООО-ра, «Чебоксарская птицефабрика» ООО-ра тата ытти çĕрте пулса курнă.

Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх

***Юн кун, декабрĕн 27-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла -9
çĕрле -9

***Кĕçнерни кун, декабрĕн 28-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла -3
çĕрле -9

***Эрне кун, декабрĕн 29-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла -8
çĕрле -10

***Шăмат кун, декабрĕн 30-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк, кăштах юр çăвать
кăнтăрла -8
çĕрле -14

❊ Ял хуçалăхĕ

# ТУТАРКАССИСЕНЕ МУСКАВ ИНВЕСТОРĔСЕМ ПУЛĂШĔÇ

***«Атлашевский» ял хуçалăх производство кооперативĕ пĕр вăхăтра районти ытти хăш-пĕр ял хуçалăх предприятийĕсемшĕн кăна мар, республикăрисемшĕн те ырă тĕслĕх пулса тăратчĕ. Çĕр лаптăкĕпе те пысăк вăл. Кĕр кĕрлесе тăракан хуçалăхра тĕрлĕ шайри канашлусем сахал мар ирттернĕ. Выльăх-чĕрлĕх отраслĕн специалисчĕсем Раççейрен конкурса унта пуçтаранниие нумайăшĕ астăвать пулĕ. Малта пыракан технологисене те ытти тепĕр хуçалăхсенчен маларах унта пурнăçа кĕртетчĕç.***

«Тĕркери сенаж» майпа симĕс апат хатĕрлекен меслете Тутаркассисем чи малтан «ярса илчĕç». Сĕт-çу комплексĕнче ют çĕршывра кăларнă оборудовани вырнаçтарчĕç. Уçă вырăнта пахча-çимĕç туса илессипе «Атлашевский» кооператива çитекен çук районта. Паян те хуçалăхăн бази çирĕп. Анчах хăшпĕр енпе кооператив «чăхăмлама» пуçланине пытараймăн.

Апла-и, капла-и, анчах пуян базăллă предприяти малашлăхне лайăх енпех курас килет. Хуçалăхри рабочисем те çавăн пек шухăшлах-тăр. Производствăран тупăш курасси тĕрлĕ фактортан килет те, анчах тĕплĕ виççехакласа кирлĕ çĕре хушма укçа хумасăр та май килмест. Иртнĕ юн кун пирĕн районта Мускавсем пулчĕç, район ертӳçипе А.П.Князевпа курнăçрĕç. Ку вăл ахаль тĕл пулу пулмарĕ. «Промышленность инвестицийĕсем» акционерсен обществи пирĕнпе килĕштерсе ĕçлес шухăш тытнă. Укçа-тенкĕ хывма Мускавсем Чăваш Ене тăнăçлă тесе хакласçĕ. Кăçалхи май уйăхĕн вĕçĕнче вĕсем ЧР Ял хуçалăх министерствипе килĕштерсе ĕçлесси çинчен договор алă пуснă. Пахча-çимĕç туса илес, упрас тата тирпейлес направлениллĕ (пахча-çимĕçрен 80 проценчĕ çĕр улми йышăнать, 10-шĕ – купăста, ытти – хĕрлĕ кăшманпа кишĕр) общество Тутаркассинчи улма-çырла тата пахча-çимĕç консервисен заводне укçа хывнă. Хальхи вăхăтри механизмсем çине кусса продукци тăвассине Мускавсем 3 хут ӳстересшĕн.

«Атлашевский» кооперативва илсен, пахча-çимĕç туса илессине инвестор унта та тытса пырасшăн. Малтанласа палăртнă тăрăх, килес çул 400 гектар çинче ӳстересшĕн, ӳлĕмрен пин гектар таран шухăш пур. Анчах çак цифрăсене татăклă тесе йышăнма тăхтамалла, мĕншĕн тесен хальлĕхе бизнес-план çук. Майракаллă шултра выльăх шучĕпе Тутаркассисем пек йышлă тытакан çук. 800 пуç сумалли ĕне унта. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетессине пăрахăçлаттарасшăн мар район ертӳçисем. Ку шухăша А.П. Князев инвесторсене уйрăммăн палăртса каларĕ. Тĕл пулу енсем: «Промышленность инвестицийĕсем» общество гендиректорĕпе М.В.Устинов тата пирĕн пуçлăхĕ А.П.Князев – килĕштерсе ĕçлесси çинчен алă пуснипе вĕçленчĕ.

В.ЭВЕРККИ.

❊ Çĕнĕ çула мĕнле кĕтсе илетпĕр?

## Владислав ГРИГОРЬЕВ, Апаш ял тăрăхĕн пуçлăхĕ:

– 2006 çулта Пасăпак патĕнче пĕр çухрăма яхăн асфальт çул хывăрăмăр. Кайри Пасăпак тата Малти Пасăпак хушшинчи тарăн çырмара йĕпе-сапара пылчăк çăрăлатчĕ. 2006 çулта кунта пĕве туса пĕтертĕмĕр, икĕ яла асфальт çулпа çыхăнтартăмăр. Çынсем çакăншăн район администрацине тав тăваççĕ. Шăнкаса çитиччен асфальт çул сарнă, ĕçе малалла тăсма вак чул турттараççĕ. Тӳсиккассине çитиччен асфальт çул хывма документсем хатĕрлетпĕр.

Пирĕн ялсенче пурăнакан 94 çемье килти хушма хуçалăха аталантарма кредит илмешкĕн заявлени панă, 82-шĕн ыйтăвне татса панă ĕнтĕ. Ыттисем 2007 çулта илĕç. Кредитпа выльăх валли вите, лупасай, ыттине тăваççĕ. Техника туянакансем те пур. Пĕр çын «УАЗик» туяннă. 4 çемье тавăрса памалла мар субсиди илнĕ, 12 çемье çĕнĕ çуртсене пурăнма кĕчĕ. Çурт-йĕр тăвакансем малашне те пулаççĕ, вĕсене çĕр лаптăкĕ виççе панă, строительство ĕçĕсем пыраççĕ.

Эсеккассинчи çĕнĕ урама электрификациленĕ, хальхи вăхăтра çынсем хăйсен çурчĕсене кĕртеççĕ. Мăштавăшри çĕнĕ çуртсене электричество илсе пыма документсем хатĕрлеççĕ. Апашра шыв пăрăхĕ 200 метр майлă улăштарма май килчĕ.

Пĕтĕмлетсе каласан, 2006 çулта территорире ырă ĕçсем чылай тума пултартăмăр. 2007 çула çĕнĕ тĕллевсемпе, çĕнĕ вăй-халпа кĕтсе илетпĕр.

# КИРЕВСĔРЛĔХЕ ХИРĔÇ

Район администрацийĕн наркотик хатĕрĕсене тата вĕсене сарассине хирĕç ĕçлекен комиссийĕн кăçалхи юлашки ларăвĕ иртнĕ. Ăна район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ В.Н.Мустаев ертсе пынă. Районта кăçалхи 11 уйăхра саккуна пăхăнмасăр наркотик сарнă тĕслĕхсем çинчен шалти ĕçсен пайĕн пуçлăхĕн çумĕ В.С.Никитин пĕлтернĕ. Районта пыракан «Çамрăксем – сывă пурнăç йĕркишĕн» акцие вĕрентӳ управленийĕн ертсе пыракан специалисчĕ В.Н.Александрова пĕтĕмлетнĕ. Ларура Ишек тата Кăшавăш ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсем Г.С.Смирновпа А.Х.Афанасьев, Кӳкеç ял тăрăхĕн пуçлăхĕн çумĕ Г.А.Ефимов профилактика канашĕсем эрех-сăрапа аташассине, психикăна наркотик хатĕрĕсемпе, тĕрлĕ наркăмăшпа сиенлетнине профилактика мĕнле туни çинчен пĕлтернĕ. Вăрман-Çĕктерти, Иккассинчи тата Ишекри шкулсенче наркотике, эрех-сăрана тата психикăна аташтаракан япаласене хирĕç мĕнле кĕрешни çинчен Ш.З.Феизов, А.В.Владимиров тата Н.А. Андреев каласа панă. Районта наркотик сарассине хирĕç 2005-2007 çулсенче кĕрешмелли ĕçсем мĕнле пурнăçланса пынипе районти тĕп пульницăн наркологĕ Е.В. Петрова паллаштарнă.

В.НИКОЛАЕВ.

❊ Ветерансен пурнăçĕ

# КАШНИНЕХ ПĂХСА ТĂРАТПĂР

РАЙОНТИ ĔÇПЕ ВĂРÇĂ ВЕТЕРАНĔСЕН КАНАШĔН ПРЕДСЕДАТЕЛĔН ДЕКАБРЬТИ ПЛЕНУМРА ТУНĂ ДОКЛАДĔНЧЕН.

Декабрĕн 17-мĕшĕнче ĕçпе вăрçă ветеранĕсен пĕтĕм Раççейри организацийĕ 20 çул тултарчĕ. 20 çул каялла, 1987 çулхи февралĕн 17-мĕшĕнче, пирĕн районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашне туса хунă, председатель пулма вăрçă ветеранне И.Ф.Кузнецова суйланă. Унтанпа 5 председатель улшăнчĕ, хальхи вăхăтра районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашне эпĕ ертсе пыратăп.

Малтанхи çулсенче пирĕн пуçламăш организацисене вырăнсенче çак çынсем ертсе пынă: Е.Ф.Федоров (Апаш), М.С.Сидоров (Шĕнерпуç), С.М.Беляева (Лапсар), Ю.Е.Марков (Иккасси), М.С.Федоров (Вăрман-Çĕктер), Н.К.Плотников (Çĕньял), Г.В.Васильев (Ишек) тата ыттисем те.

Çак ветерансем вара пуçламăш организацисене 10 çул ытла ертсе пынă: Г.В.Васильев (Апаш), М.А.Андриянов (Шемшер), А.Н.Миронов (Ишек), В.И.Степанов (Чăрăшкасси), Г.Н.Николаев (Ишлей), И.С.Афонин (Кӳкеç), А.Ф.Федоров (Лапсар), Л.И.Грачев (Янăш), П.А.Афанасьев (Сарапакасси), Г.П.Николаева (Шĕнерпуç).

Çак юлташсем ветерансен организацийĕсене лайăх ĕçлеттереççĕ: К.П.Михайлова (Шăмăш), Ю.И.Судакова (Тутаркасси), Г.Н.Николаев (Ишлей), А.Н. Миронов (Ишек), В.И.Степанов (Чăрăшкасси), В.И. Смородинов (Апаш), Г.П.Николаева (Шĕнерпуç), В.Ф.Генералова (Кӳкеç).

20 çул хушшинче пирĕн организаци районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен интересĕсене хӳтĕлес тĕллĕпе чылай ĕç туса иртнĕ. Çакăн çинчен унăн ертӳçисем район халăхне пĕлтерсех тăнă. Районта радиоузел ĕçленĕ çулсенче организаци унпа та усă курнă. Вăл ĕçлеме пăрахнине шута илсе малашне организаци ĕçĕ-хĕлĕ тата йышăнăвĕсем çинчен «Тăван Ен» хаçатра пĕлтерсе тăрăпăр. Çавăнпа канаш нумаях пулмасть ветерансене килес çултан çак хаçата çырăнса илме чĕнсе каларĕ.

Паянхи кун тĕлне районта 13200 пенсионер, çав шутра вăрçă ветеранĕ – 202, çав шутра 23 хĕрарăм, салтак арăмĕ – 62, тыл ĕçченĕсем – 1884, ĕç ветеранĕсем 6470 шутланаççĕ.

Организацин кăçалхи ĕç планне канашăн январьте иртнĕ ларăвĕнче çирĕплетнĕ, ăна «Тăван Ен» хаçатра пичетлесе кăларнă. Ĕç планĕ туса хатĕрлес тĕллĕпе Ишлейри ветерансен канашĕ ырă тĕслĕх кăтартрĕ.

Пенсионерсемпе мĕнле ĕçлемеллине ветерансен активне «Вега» санаторире иртнĕ семинарта вĕрентнĕ. Вăл икĕ куна пычĕ. Канаш хăйĕн ларăвĕсене вырăнсене тухса та иртерет. Президиумăн 8 ларăвне 10 ытла ял тăрăхĕн территорийĕнче йĕркеленĕ. Çав ларусене, канаш членĕсемсĕр пуçне, шкул директорĕсем, культура тата медицина ĕçченĕсем хутшăннă.

Район халăхне пăхса тăракан социаллă центр ĕçченĕсем кăçал 137 вăрçă ветеранне, 42 салтак арăмне, 325 тыл ĕçченне тата пĕччен пурăнакан 294 ватă çын патне пырса тĕрĕсленĕ. Çакăн хыççăн 6-не киле тăтăшах пырса пăхса тăма пуçланă, 33-не районти ветерансен çуртне вырнаçтарма направлени панă, 11-не патшалăхăн интерначĕсене пурăнма вырнаçтарнă.

Хальхи вăхăтра районта ватă çынсене, инвалидсене пăхса усракан 8 çурт. Вĕсенче 102 ватă çын тата инвалид, çав шутра вăрçă ветеранĕ П.Ф.Турханов, эвакогоспиталь медсестри пулнă М.Ф.Филиппова, 26 тыл ветеранĕ, 23 ĕç ветеранĕ тата 20 ĕç инваличĕ пурăнать.

Çак çуртсен ĕçне лайăхлатас тĕллĕпе вĕсен хушшинче çулсерен конкурссем иртереççĕ, ветерансем мĕнле пурăннине тĕрĕслеççĕ. Пĕрремĕш вырăна Хыркассинчи ветерансен çурчĕ йышăнса пырать, иккĕмĕшне – Шорккари ветерансен çурчĕ, виççĕмĕшне – Янăшри тата Шăмăшри ветерансен çурчĕсем тухнă. 8 çурта та тĕрлĕ номинаципе призсем панă.

Ветерансен канашĕсем хушшинче конкурссем иртерсех тăратпăр. Вĕсен ĕç-хĕлне вырăна тухса кайса тишкеретпĕр. Район канашĕн президиумĕ пĕрремĕш вырăна Ишлейри ветерансен канашĕ (председателĕ Г.Н.Николаев) тивĕçнĕ тесе йышăннă, ăна ĕçре усă курма пĕр пин тенкĕ преми панă. Иккĕмĕш вырăнта – Кӳкеçри организаци (председателĕ В.Ф.Генералова), ăна ĕçре усă курма 800 тенкĕ панă. Виççĕмĕшĕнче – Апашри ветерансен организацийĕ (председателĕ Г.В.Васильев), 500 тенке тивĕçнĕ. Çавăн пекех Ишекри, Иккассинчи, Лапсарти, Шĕнерпуçĕнчи, Шăмăшри тата Çĕньял-Покровскинчи ветерансен организацийĕсем аван ĕçленине палăртнă.

Аслă Çĕнтерӳ 60 çул тултарнă май районти 7 вăрçă ветеранне хваттерпе тивĕçтернĕ.

Ветерансен организацийĕсем çулсерен «Забота» программа йышăнаççĕ. Унпа килĕшӳллĕн кашни ял поселенийĕн территорийĕнче ветерансене вутă-шанкăпа, çĕр кăмрăкĕпе тивĕçтерессипе, çуртсене газ кĕртессипе, пенсионерсене выльăх апачĕпе тивĕçтерессипе, пахча сухалаттарассипе, ытти ĕçсемпе çыхăннă ыйтусене пăхса тухаççĕ. Эпĕ ветерансене, инвалидсене çапла чĕнсе калатăп: хăвăрăн социаллă пурнăç, медицина, хуçалăх ыйтăвĕсене ветерансен районти организацийĕсенче çĕклеме ан ӳркенĕр. Ку вăл сире йывăрлăхран тухма пулăшĕ. Çавăнпа пирĕн пуçламăш организацисен тата районти ветерансен канашĕсен сире яланах хапăл туса кĕтсе илетпĕр.

Иван ПАВЛОВ, районти ĕçпе вăрçă ветеранĕсен канашĕн председателĕ.

# ВĔÇЕН КАЙĂКСЕНЕ ЙЫШĂНМА ХАТĔР

***Чăваш Ен Президенчĕ Н.В.Федоров: 2007 çул – Ача çулталăкĕ, тесе пĕлтернине Чăваш Республикине инçетри Çурçĕртен килсе çитсенех пĕлтерчĕç мана. Питĕ савăнтарса ячĕ çак хыпар. Тен, Ача çулталăкĕнче ача çуратасси Шупашкар районĕнче те палăрмаллах ӳсĕ. Çакна шанăç кӳрекенни пур.***

Акă декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне района 514 кайăк вĕçсе килнĕ. Ку вăл пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен 24 пепке нумайрахчине пĕлтерет!

Çитес çулсенчен пуçласа патшалăх иккĕмĕш ачана пăхса ӳстерме тата вĕрентме 250 пин тенкĕ уйăрма пăхни те ашшĕ-амăшне ача çуратма самаях хавхалантарĕ. Анчах Сирĕн районти ача çураттаракан çурт 2007 çулта шăнкăрч чĕпписене кĕтсе илме хатĕр-и-ха?

Çакна пĕлесчĕ тесе район пульницин акушер уйрăмне шыраса тупрăмăр, патакпа алăкĕнчен шаккатпăр, пĕчĕк кантăкне усрĕç. «Хĕл Мучи, эсĕ-и?» – теççĕ. «Эпĕ, – тетĕп. – Хĕл кайăкĕсене курма килтĕм, – тетĕп. – Кĕртетĕр-и?» Кĕртрĕç вара.

Пире кунти лару-тăру кăсăклантарчĕ. Уйрăм заведующийĕ Е.А.Данилова тăрăшнипе чĕкеç чĕпписене 2007 çулта кĕтсе илме тĕплĕн хатĕрленеççĕ кунта. Нимле чăрмав та, нимле кăлтăк та пулмасть. Çуралакан пепкесене пурне те тимлĕн пăхса, сывлăхĕсене çийĕнчех тĕрĕслесе йышăнма шантараççĕ. Çак ĕçе çӳллĕ шайра пурнăçласшăн ăста акушеркăсем – Т.С.Федорова, Ф.А.Кильмукова, Н.А.Бронова, Н.А.Терентьева, Н.В. Ефимова, медицина сестрисем – Г.В.Фомина, С.А. Бондаренко, А.А.Шашина, Э.В. Матвеева, санитаркăсем – Г.Д.Семенова, М.К.Степанова, Ю.К. Алексеева, А.Ефимова сестра-хозяйка тата С.Б.Никитина неонатолог ырми-канми вăй хураççĕ.



Акă вĕсем – çĕнĕ кайăксем!

Пӳлĕмсенче ăшă, таса. Медперсонал ача амăшĕсене тата пепкесене тимлĕ пăхать. Çакна эпир хамăр куçпа курса ĕнентĕмĕр.

Пепкисем вара!.. Пепкисем ытла та пĕчĕккĕ-çке, хитрескерсем ыйха туртаççĕ кăна...

Ача çуратакан çуртран эпир тулли кăмăлпа тухрăмăр. Медицина ĕçченĕсем Ача çулталăкне кĕтсе илме хатĕр!

Хĕл Мучипе Ю.ЮМАН çӳренĕ.

# ОБЬЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

***МУП «Страховая больничная касса города Чебоксары» сердечно поздравляет всех с наступающим Новым годом!***

С боем курантов на Спасской башне Кремля каждый из нас перевернет новую страницу в своей жизни. Подводя итоги уходящего года, мы возлагаем большие надежды на год грядущий.

Желаем, чтобы в каждом доме, в каждой семье были мир и покой, чтобы этот светлый праздник, начавшись в новогоднюю ночь, продлился как можно дольше. Пусть с наступлением Нового года в каждый дом, в каждую семью войдет большое человеческое счастье!

Пусть родители гордятся своими детьми, а дети — родителями! Пусть появится больше счастливых семей, в которых родятся счастливые дети. Пусть всем вам сопутствуют успехи в работе и учебе, удача во всех добрых делах! Крепкого здоровья вам и процветания!

*Генеральный директор*
*И.В.Клементьева.*

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,0641 га с кадастровым номером 21:21:07 07 07:0157, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Юраково, ул.Нагорная (земли поселений), для огородничества.

Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность за плату ранее арендованного земельного участка площадью 0,15 га с кадастровым номером 21:21:10 20 03:0044 (земли поселений) для огородничества, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, п.Сюктерка, ул.Волжские зори. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в аренду земельного участка площадью 0,1549 га, расположенного по адресу: Чувашская Республика, Чебоксарский район, д.Юраково, ул.Нагорная (земли поселений), сроком на 11 месяцев для ведения личного подсобного хозяйства без права возведения на нем зданий, строений.

Адрес: ***пос.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность за плату земельного участка площадью 0,1167 га с кадастровым номером 21:21:20 06 02: 0072, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Моштауши, ул.Лесная (земли поселений), для огородничества.

Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: (8240) 2-15-92.***

**Согласно** закона «Об обороте земель с/х назначения» ст.13 собственники земельных долей сообщают о намерении выделиться в натуре из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет земельных долей по 2,03 га пашни каждый: в поле №6 между д.М.Карачуры и д.Сархорн Чебоксарского района ЧР Андреева К.В., Александрова Н.А., Андрианов В.В., Автономова Е.П., Артемьева А.А., Александрова Е.С., Афанасьев И.В., Алюков Ю.В., Блинов В.А., Блинова Р.Г., Бахметьева Г.П., Васильева Е.П., Волкова В.П., Васильева Л.Н., Гуськова З.Г., Голенов Н.П., Голенова Н.П., Гришатова З.Г., Данилова Е.З., Данилов Ю.Г., Данилова М.П., Дмитриева Е.П., Иванова Н.И., Иванова А.И., Иванова Р.Г., Ильина Н.И., Игнатьева М.Н., Корнилова В.Н., Казенова З.Г., Карпова М.Н., Корытникова З.Г., Краснов В.П., Леонтьева В.П., Муштакова Е.В., Моргунова В.П., Михайлова Ю.А., Михайлов В.М., Нужина Л.Г., Николаев И.И., Николаева Е.Ф., Нужин С.В., Охотина Л.С., Пайгусова П.В., Петрова В.В., Петрова З.И., Петрова М.А., Садеркина Р.И., Семенова С.Л., Сергеева И.М., Сорокина К.А., Сметанина З.А., Степанова А.С., Сорокин И.И., Соколова Е.А., Соловьева А.И., Соловьева Г.И., Саляева А.Ф., Смирнова Г.Г., Терентьев В.М., Таймаскина А.В., Федорова З.Ф., Федорова Е.Ф., Федоров А.П., Харкевич Е.Н., Шарымова И.В., Юрьева К.И., Яргунинова О.С. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Согласно** закона «Об обороте земель с/х назначения» ст.13 собственники земельных долей сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования к-за «1-ое Мая» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 2,56 га пашни и 0,29 га пастбища в поле №1 второго полевого севооборота, участок №1 с северо-западной стороны ГСУ Давыдов А.Н., Андриянова С.А., Кузнецов Б.П., Мальков А.П. Возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Добавление.** В райгазете «Тăван Ен» №№ 132-133 от 18.11.06 г. в объявлении о выделении земельных долей Яковлевой (Васильевой) В.В. и др. после фамилии «Никифорова С.Л.» добавить фамилию «Михайлова Е.М.»

***Куплю землю, земельную долю от 1,5 га. Тел.: 48-83-03.***

***Куплю производственную базу. Тел.: 48-83-03.***

**Участник** долевой собственности на землепользование СПК-колхоз «Пучах» Чебоксарского района Васильева Т.И. площадью 1,88 га пашни сообщает о своем намерении выделить земельный участок в поле № IV первого полевого севооборота, расположенного между автодорогами ст.Ишлеи-Янгильдино и ст.Ишлеи-с.Ишлеи. Возражения направить в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Участники** долевой собственности на землепользование СХПК им.И.Г.Кадыкова Чебоксарского района ЧР 1) Федорова Мария Егоровна, проживающая по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Аркасы, 2) Иванова Людмила Ивановна, проживающая по адресу: ЧР, Аликовский район, с.Раскильдино, 3) Захарова Серафима Егоровна, проживающая по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Аркасы на основании протокола общего собрания участников долевой собственности от 26.11.2005 г. и ст.13 Закона «Об обороте земель с/х назначения» сообщают о своем намерении выделить земельные участки по следующим ориентирам и площадям: 1) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 860 м западнее жилого дома № 3 по ул.Верхняя д.Юраково и 0,27 га пастбища в 3460 м западнее жилого дома № 28 по ул.Прямая д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 2) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 780 м западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково и 0,27 га пастбища в 3440 м западнее жилого дома №28 по ул.Прямая д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР; 3) 2,15 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота в 750 м западнее жилого дома №3 по ул.Верхняя д.Юраково и 0,27 га пастбища в 3400 м западнее жилого дома № 28 по ул.Прямая д.Янашкасы Чебоксарского района ЧР. Площадь образуемых участков осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для с/х угодий в границах которых образуются данные земельные участки. Возражения просим присылать в течении месяца со дня выхода в печать настоящего объявления по адресу: ***п.Кугеси, ул. Шоссейная,д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Участники** долевой собственности 1) Майоров А.В., Майорова Э.Ф., 2) Петрова М.М., Петров Н.Х., 3) Пигачев И.М. проживающие в д.Малый Сундырь, ул.Магистральная, д.34, 21, 30 и г.Чебоксары, ул.Кукшумская, 25, кв.8 сообщают о своем намерении выделить земельный участок на территории СХПК «Атăл» Чебоксарского района по следующим ориентирам и площадям: 1) в поле №1 третьего севооборота уч.№3 восточнее д.Малый Сундырь площадью по 1,47 га пашни (2 доли); 2) в поле № 2 третьего севооборота юго-восточнее д.Малый Сундырь по 1,47 га пашни (2 доли); 3) в поле №1 третьего севооборота уч.№3, восточнее д.Малый Сундырь 1,47 га пашни (1 доля). Площадь образуемых участков осуществляется в пределах кадастровой стоимости, установленной для с/х угодий, в границах которых образуется данный земельный участок. Возражения просим присылать в течении месяца в наш адрес и в адрес ***территориального отдела по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР, п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9.***

**Участники** земельной доли Ермаков П.П., Ермаков В.П., Ярмандеев Ю.И., Андреева Е.К., Яковлева У.Е., Яковлев С.П., Ермакова М.Р., Ермакова Л.Г., Ермаков С.П., Ермакова В.П., Абрамова Ф.В., Григорьева Е.В., Самсонова А.В. сообщают о своем намерении выделить земельные участки по 2,09 га пашни в поле №7 первого полевого севооборота около д.Хорамакасы из земель ПСХК «Ишлейский» Чебоксарского района ЧР. Возражения просим прислать в течении 30 дней по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Участники** земельной доли Андреева Е.Д., Владимиров Н.П., Владимирова Н.А., Кузьмин К.В., Кузьмина Т.В., Емельянов И.П., Емельянов И.П., Никонорова К.М., Иванов К.И., Иванова А.М. сообщают о своем намерении выделиться из долевых земель СХПК «Туруновский» в счет доли в поле №1 полевого севооборота, участок №1 по 2,09 га пашни около деревни Анаткас-Туруново. Возражения просим прислать по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района в течении месяца со дня опубликования объявления.***

**Участник** долевой собственности СХПК «Атăл» Свидерская Л.Г. сообщает о своем намерении выделить земельный пай площадью 1,07 га пашни в поле №3, рабочий участок 1, второго полевого севооборота юго-западнее д.20 по ул.Солнечная д.Кибечкасы и площадью 0,40 га пашни в поле №3 третьего полевого севооборота по ул. Становая д.22 западнее д.М.Сундырь. Возражения прошу прислать в течении месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Участники** земельной доли Грибова Н.Ф., Федотов И.С., Андреева И.А., Карпов А.Р., Семенов Е.П., Семенова З.А., Карпова К.С., Рыжков Г.В., Рыжкова Е.А., Мешкова С.С., Портнов С.А., Емельянова П.Е., Олаева Ю.Ф., Туманова Е.М., Сумков А.Н. Волкова В.П., Федоров П.Ф., Иванова Е.А., Иванова А.С., Иванов В.П., Якимова Ю.И., Иванова Н.В., Олаев В.И, Олаева Л.М., Олаев И.В., Олаева М.А., Якимова Ф.И., Якимов В.Д., Мешков П.Ф., Мешкова Л.Г., Мешкова Т.В., Иванова И.И., Данилова М.Н., Левашова В.И., Волков К.А., Максимова Р.Е. сообщают о своем намерении выделить земельные участки по 2,09 га пашни в поле № 1 второго полевого севооборота около д.Олгаши из земель ПСХК «Ишлейский» Чебоксарского района ЧР.

Возражения просим прислать в течение 30 дней по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственник** земельной доли Ярдухина Е.П. сообщает о намерении выделиться из земель СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет долей 1,47 га пашни в поле №4 первого полевого севооборота, раб.уч.№1 восточнее д.Онгапоси. Возражения направить в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельных долей Марков В.А. и Самаркина Л.А. сообщают о своем намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 2,03 га пашни в Чандровском саду. Возражения направить письменно в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственники** земельный долей Петров Г.П., Петрова Т.М. сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории СХПК им. И.Г. Кадыкова Чебоксарского района ЧР в счет земельных долей по 2,15 га пашни в поле №6 I кормового севооборота юго-восточнее д. Ильбеши на расстоянии 200 м от дороги и по 0,27 га пастбища с левой стороны автодороги Ильбеши-Шанары рядом с полем №6 IV почвозащитного севооборота. Возражения направить в месячный срок по адресу: ***429500, п. Кугеси, ул. Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственники** земельных долей колхоза «1-ое Мая» Чебоксарского района на основании протокола общего собрания участников долевой собственности от 09.09.2006 г. в порядке ст.13 Закона «Об обороте земель с/х назначения» Игнатьева З.И., Седова Ю.С., Андреев В.Н.-2 доли, Агеносова В.Я., Тимков В.А., Иванова В.И., Мышкин В.А., Михайлова М.Н., Михайлова Р.М., Степанова Т.С., Сорокин В.Н., Медников А.Е., Медникова А.В. сообщают о своем намерении выделиться из земель с/х назначения в счет долей по 2,56 га пашни на севооборотах до полного заполнения поля №4 с переходом на поле №5 третьего полевого севооборота, участок №1, северо-западнее д.Ямбарусово. Выделяемые участки не превышают среднекадастровую оценку, поэтому компенсация не предусматривается. Свои возражения направить в месячный срок со дня публикации объявления по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, 15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственник** земельной доли Федорова К.Г. и Смелов Г.Н. сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР в счет долей по 1,47 га пашни в поле №5 2-го почвозащитного севооборота западнее д.12 по ул.Становая д.М.Сундырь. Выделяемый участок не превышает среднекадастровую оценку, поэтому компенсация не предусматривается. Возражения направить письменно в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственники** земельных долей Кудряшова З.П., Кудряшов Н.И. сообщают о намерении выделиться из земель с/х назначения на территории землепользования СХПК «Атăл» Чебоксарского района в счет долей по 1,47 га пашни в поле №2 второго почвозащитного севооборота севернее д.36 по ул.Рыбацкая д.Адылъял; в поле № 3 третьего полевого севооборота раб.уч.№2 западнее д.32 по ул.Становая д.Малый Сундырь Кудряшов Н.И. – 2 доли. Возражения направить в месячный срок по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**Собственники** земельных долей СПК-колхоз «Пучах» Чебоксарского района ЧР Тарасова М.П. и Ильин В.А. сообщают о намерении выделиться в счет земельных долей в поле VII второго севооборота за дер.Селиванкино площадью по 1,88 га пашни каждый. Возражения прислать по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района.***

**В соответствии** решением общего собрания собственников земельных долей СХПК «Туруновский» от 16 апреля 2006 г. Соловьева Р.П., Григорьев А.Г., Григорьева Л.П., Григорьев А.А., Григорьев П.А., Соловьева Н.П., Михайлова В.В., Павлова И.О., Павлов Н.Н., Павлова Т.Н., Павлова В.Н., Бондареева З.К., Бондареев В.П. сообщают о своем намерении выделиться из долевых земель СХПК «Туруновский» в счет доли в поле №2 полевого севооборота участка №1 по 2,09 га пашни на каждого собственника земельной доли, расположенного за селом Туруново, рядом с асфальтированной дорогой Анаткас-Туруново. Возражения просим прислать по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района в течении месяца со дня опубликования данного объявления.***

**Участник** долевой собственности на землепользование СХПК «Атăл» Чебоксарского района ЧР Кудряшов Г.Л. сообщает о намерении выделиться в счет земельной доли 1,47 га пашни в поле №5 второго полевого севооборота 300 м юго-восточнее д.2 по ул.Транзитная д.Кибечкасы. Возражения прошу направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, 15, администрация Чебоксарского района.***

✵ ✵ ✵

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» скорбит и выражает глубокое соболезнование врачу-эндокринологу Ираиде Алексеевне Николаевой в связи со смертью отца

**Алексея Васильевича**
**ПОРФИРЬЕВА.**

ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики, РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: А.А.СУСМЕТОВА.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист. Номер подписан в печать: 26.12.2006 г. в 16 час. 00 мин. Тираж 1800. Заказ № Индекс газеты - 54820.